27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944 МАЙ 6 ШАМАТКУН 89(6184) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне пурте çырăнса илсе, тăшмана çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшар!

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне ăнăçлă вырнаçтарар!

СССР Союзĕн правительстви Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне кăларасси çинчен пĕлтерни хыпар пирĕн паттăр тăван çĕршыв тăрăх — Хура тинĕсрен пуçласа Баренц тинĕсне çити, Балти тинĕсĕнчен пуçласа çĕршывăн инçет-хĕвелтухăçĕнчи чиккине çити хăвăртрах саланчĕ. Фабрикăсемпе заводсенче, шахтăсенче, чугун çул транспорчĕнче, колхозсемпе совхозсенче, наука тата совет учрежденийĕсенчи совет ĕçсыннисем, Хĕрлĕ Çар воинĕсем хăйсен пархатарлă шухăш-кăмăлĕсене палăртма, тăван çĕршыв умĕнчи патриота тивĕçне пурнăçа кĕртме — çĕнĕ заема çырăнма ирхи митингсемпе пухусене пуçтарăнаççĕ.

Митингсемпе пухусенче калакан сăмахсем вăрăм мар. Анчах вĕсем совет ĕçсыннисен чĕринчи таса та çутă ĕмĕтсене, совет ĕçсыннисен пĕр шухăш-кăмăлне — нимĕç захватчикĕсене пĕтĕм йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкас шухăш-кăмăла палăртаççĕ. Халăхăн ши-меле. Гитлерла Германие çĕмĕрсе тăкма вăрçă ĕçне укçа-тенкĕ пама [illegible] Хĕрлĕ Çар тăван çĕршыва хăтарма [illegible]

Иртнĕ çулта пирĕн правительство халăхран 12 миллиард тенкĕ кивçен пама ыйтрĕ. Совет халăхĕ 20 миллиард тенкĕ пачĕ. Совет заемĕсене сарасси малашне 15 çул хушшинче 65 хут ытла ÿсрĕ. Заем сарас тата Хĕрлĕ Çар фондне укçа-тенкĕ пухас ĕçре пирĕн республикăри ĕçсыннисем те активлăн хутшăнаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи çулсенче кăна республикăри ĕçсыннисем государство заемĕсене 210 миллион тенкĕлĕх çыранса илнĕ. Нумай пин тенкĕ оборона фондне панă.

Совет халăхĕ халĕ, Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне вырнаçтарнă хăтра те, пĕтĕм тĕнче умне хăйĕн улăпла хăватлă килĕштерне тухса тăчĕ. «Совет халăхĕ питех те тĕлĕнмелле ĕçсем тума, чи йывăр условисенче те çĕнтерсе тухма пултарать. Рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийĕ, пĕтĕм совет халăхĕ тăшмана аркатса тăкассине хăвăртлатма, фашистсем ишĕлтерсе пĕтернĕ хуçалăха юсаса йĕркелеме, хамăр çĕршыва вăйлăрах та пуянрах тума пĕр шухăшпа тăрăшаççĕ» (СТАЛИН).

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри Капитонова инженер сменинчи рабочисем çĕнĕ заема уйăхри ĕç укçи 150 процентчĕ чухлĕ çыранса илнĕ. Стахановец Антонов юлташ уйăхри ĕç укçи 250 процентне чухлĕ, шофер Сорокин уйăхри ĕç укçи 350 процентне чухлĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи ĕç резервисен управленийĕн работникĕ В. Алексеев юлташ уйăхри ĕç укçи 200 процентне чухлĕ çыранчĕ. Çĕнĕ заема сарасси республикăри пур предприятисенче те пысăк çĕкленÿпе иртсе пырать. Пур рабочисемпе служащисем тата инженерсемпе техниксем те çĕнĕ заема икĕ-виçĕ эрнери, уйăхри ĕç укçи чухлĕ çыранаççĕ.

— Суракине кăтартуллă ирттерер, колхозсемпе совхозсенче малта тăракан агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырар! Тырпул тухăçне ÿстерер, пĕрчĕллĕ тырăсем тата ялхуçалăхĕнчи ытти культурăсене ытларах пухса илер! Фронтпа çĕршыва — апат-çимĕç, промышленноçа — чĕртавар ытларах туса парар. Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерÿ тума!

Çапла калаççĕ колхоз хресченĕсем, совхозсемпе МТС-сенчи работниксем. Вĕсем хăйсен сăмахĕсене хĕрÿллĕ ĕçпе тата фронтпа çĕршыва укçа-тенкĕ паппе çирĕплетеççĕ. Вăрмар районĕнчи колхозниксем Виççĕмĕш Военнăй Заема темиçе сехет хушшинчех 6 миллион та 735 пин тенкĕлĕх вырнаçтарса, заем укçине 5 миллион та 550 пин тенкĕ пухнă. Заем сарасси Красноармейски, Октябрьски, Етĕрне, Шупашкар тата ытти районсенче те ăнăçлăн пырать. Малта пыракан колхозниксем — тăван çĕршывăн сумлă патриочĕсем çĕнĕ заема нумай пин тенкĕлĕх çыранса илеççĕ. Шупашкар районĕнчи «Урожай» колхоз колхозникĕ В. Егоров юлташ, нумай пулмасть хăйĕн колхозне 140 пăт вăрлăх кивçен панăскер, çĕнĕ заема 50.000 тенкĕлĕх çыранса илнĕ. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ А. Гаязов, танксен колоннине тума 105.000 тенкĕ укçа панăскер тата государствăна кооперацие урлă 178 пăт тырă сутнăскер, халĕ татах хăй фронтшăн вăй-хăватне шеллеменнине кăтартса пачĕ. Вăл çĕнĕ заема 40.000 тенкĕлĕх çыранса, укçине çийĕнчех хывнă. Калинино районĕнчи «Чăваш Коммуни» колхоз председателĕ И. Капитонов 35.000 тенкĕлĕх çыранса укçине те çийĕнчех хывнă. Канаш районĕнчи «Красное пламя» колхоз председателĕ Васильев юлташ тата Доронин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Филиппов юлташсем 25-шер пин тенкĕ çыранса илнĕ. Çĕнĕ заема 10-шар, 15-шер пин тенкĕлĕх çыранса илекенсен йышĕ ÿснĕçемĕн ÿссех пырать.

Виççĕмĕш Военнăй Заема çырăнасси хулара та, ялта та ăнăçлăн пырать. Заем тухнă кунах республикăри ĕçсыннисем çĕнĕ заема 100 миллион тенкĕлĕх ытла çыранса илсе, заем укçине 55 миллион тенкĕ ытла перекет кассисене хывнă. Заем сарасси иртнĕ çулхинчен нумай хăвăртрах та организованнăрах пулса пырать. Ку ĕнтĕ ĕçсыннисен активлăхĕ тата патриотизмĕ вăйланса пынине, совет ĕçсыннийĕсем фронта ĕçпе те, укçа-тенкĕпе те пулăшма яланах хатĕр тăнине кăтартса парать.

Ĕçсыннисен патриотизмлă çĕкленĕвĕ пысăк пулни Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемĕ ăнăçлăн сарăласси çине шанса тăма май парать. Анчах ку пачах ĕç хăй тĕллĕн пуласси пĕлтермест-ха. Партипе совет, комсомол тата профсоюз организацийĕсен, финанс органĕсен паянхи хисеплĕ задачи вăл — ĕçсыннисен патриотизмлă çĕкленĕвне малалла аталантарса пырасси пулать. Ĕçсыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилесе, ĕçсыннисене Сталин юлташăн Майăн пĕррремĕшĕнчи приказне тĕплĕн ăнлантарса парса, заем çырăнас ĕçе пур ĕçсыннисене те явăстармалла тăвас пулать. Кашни рабочи, служащи, колхозник заемлă пултăр.

Заема ăнăçлăн вырнаçтарни — ĕçĕн пуçламĕшĕ кăна пулать-ха. Заема вырнаçтарнипе пĕрлех заем укçине пухассине организацилемелле. Ку ĕçе предприятисемпе учрежденийĕсен, перекет кассисене пулăшакан комиссисен тимлĕн тăрăшсан кăна лайăх йĕркелеме пулать. Çавăнпа та ĕнтĕ перекет кассисен комиссийĕсемпе финанс уполномоченнăйĕсен ĕçне тĕпрен лайăхлатмалла.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар, аслă полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, нимĕç дивизийĕсене Сталинград патĕнче аркатса тăкнăранпа Атăл шывĕнчен Серет шывĕ патне, Кавказ тăвĕсем патĕнчен Карпат патне çитрĕ. Çак çĕнтерÿсене вăл пĕтĕм совет халăхĕ тĕрек парса пулăшса пынипе турĕ. Анчах вăрçă пĕтмен-ха. Нимĕç захватчикĕсене хамăр тăван çĕршывран тĕпĕ-йĕрĕпех хăваласа кăларма тата та ытларах вăй хумалла, кĕрешмелле.

Совет ĕçсыннийĕ! Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар хамăрăн çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн, совет халăхĕн телейлĕхĕшĕн кĕрешет. Пурте Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне çыранса илер, нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкас сехете çывхартар!

Тăван çĕршывăн патриочĕсем—Красноармейски районри „Унга" колхоз колхозникĕ И. ЕВДОКИМОВ юлташ çĕнĕ заема—50.000 тенкĕллĕх, Калинино районĕнчи „Новая жизнь" колхоз председателĕ Д. УГЕНЕВА юлташ—30.000 тенкĕллĕх, Канаш районĕнчи „Красное пламя" колхоз председателĕ П. ВАСИЛЬЕВПА Доронин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ М. ФИЛИППОВ юлташсем—25.000-шер тенкĕллĕх туяннă

ИКĔ КУНХИ ИТОГСЕМ

Республикăри ĕçсыннисем Государствăн Виççĕмĕш Военнăй заемне икĕ кун хушшинче пĕтĕмпе 166 миллион та 808 пин тенкĕлĕх çыраннă, заем укçине 76.015 пин тенкĕ пухнă.

Заем сарас тĕлĕшпе Вăрмар районĕ, унта заем укçине 7 миллион тенкĕ ытла пухнă, Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски, Шупашкар, Етĕрне районĕсем тата Шупашкар хули малта пырать.

Заем сарас ĕçре Элĕк, Йĕпреç, Шăхасан районĕсем каюлса пыраççĕ.

Заем çырăнасси пысăк çĕкленÿпе пырать.

Колхоз активĕ пример кăтартать

ВĂРМАР. (Хамăр корр.). Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемĕ тухни çинчен Чубайри «Дружба» колхоз членĕсем хăвăрт пĕлчĕç. Совет правительствин пĕлтерĕвне радио тăрăх парсанах, агитаторсемпе вулавçăсем çĕнĕ заем тухни çинчен пĕлтерме хире тухрĕç. Колхозниксем ĕçрен таврăнсанах клубра хаваслă митинг пулса иртрĕ. Колхоз председателĕ коммунист И. Г. Григорьев юлташ колхозниксемпе колхозницăсене çĕнĕ заемăн условийĕсемпе паллаштарчĕ. Ун хыççăнах заема çырăнса илес ĕç пуçланчĕ.

Григорьев юлташ хăй 10.000 тенкĕлĕх, парторганизаци секретарĕ В. Т. Тимофеев — 6.000 тенкĕлĕх, колхоз счетовочĕ Е. И. Мурашова 5.000 тенкĕлĕх тата уйĕç бригадин бригадирĕсем капиисех 4.500-шер тенкĕлĕх çыранса, укçине те çавăнтах тÿлерĕç. Колхозри паллă стахановкăсем те хăйсен тивĕçлĕ сăмахне пĕлтерчĕç. Фермăра ĕçлекенсем Ф. Федорова тата А. Илларионова 2.500-шер тенкĕлĕх заем облигацийĕсем туянчĕç.

Колхозра пурĕ çĕнĕ заем 265.000 тенкĕлĕх сарăлчĕ. Укçине пĕтĕмĕшпех пухнă.

25-шер пин тенкĕлĕх

КАНАШ, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри малта пыракан колхозниксем çĕнĕ заем облигацийĕсене нумай пин тенкĕлĕх туянаççĕ. Çапла Асхвари «Красное пламя» колхоз председателĕ Васильев юлташ 25.000 тенкĕлĕх, Доронин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ М. Филиппов 25.000 тенкĕлĕх, «Динамо» колхоз председателĕ Еранцев юлташ 20.000 тенкĕлĕх, «Парижская коммуна» колхоз председателĕ 15.000 тенкĕлĕх çыранса илсе укçине пĕтĕмпех хывнă. Çĕнĕ заема ик-виçшер, пиллĕкшер пин тенкĕлĕх çыранакансен йышĕ сехетрен сехетех ÿссе пырать.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн Президиумĕ йышăннă постановлени

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне çырăнас ĕçе профсоюз организацийĕсем хутшăнасси çинчен

ССР Союзĕн правительстви йышăннă тăрăх, Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне кăларнă. Çав заемран кĕнĕ укçа-тенкĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотĕн хăватне вăйлатас ĕçе, çапла вара фашистла нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатассине хăвăртлатас ĕçе каять. Халĕ кăларнă заемран пухăнакан укçа-тенкĕ çавăн пекех тата халăх хуçалăхне малалла аталантарнă çĕре, нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи фабрикăсемпе заводсене, шахтăсемпе рудниксене, шкулсемпе больницăсене, пурăнмалли çуртсемпе культурăпа пăла учрежденийĕсене юсаса йĕркеленĕ çĕре каять.

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне илме çырăнасси совет халăх пурнăçĕнчи политикăллă пысăк событи пулса тăрать. Вăл совет халăхĕ гитлерла вăрă-хурахсене аркатса тăкма, нимĕçсем вăхăтлăха хуçаланса пурăннă районсенчи халăх хуçалăхне хăвăртрах юсаса йĕркене кĕртме, вăл хăйĕн пĕтĕм пархатарлă ĕçĕпе çеç мар, перекетленĕ укçипе те Хĕрлĕ Çара пулăшма хатĕр тăнине кăтартса парать.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн Президиумĕ профсоюзсен мĕнпур организацийĕсене — профсоюзсен центрĕсене, крайсене, облаçсенчи, фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнти комитечĕсене — Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне рабочисемпе работницăсем, инженерсем, техниксем тата служащисем, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕçсыннисем хушшинче çыранса илес ĕçе ирттернĕ çĕре активлăн хутшăнма хушать.

Профсоюз организацийĕсен анлă массăсене çакăн çинчен ăнлантарса памалла: Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне Тăван çĕршывшăн историллĕ паллă кунсенче, Хĕрлĕ Çар аслă çĕнтерÿсем тунă кунсенче кăлараççĕ, çак заем вăл — эпир нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕнтерессине çывхартмалли заем пулса тăрать.

Заема мĕнле тĕллевпе кăларнине тата вăл вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен мĕнле пырăн йышăнса тăнине ăнлантарса парса, профсоюз организацийĕсен, заема ирĕклĕн çырăнас йĕркене çирĕп тытса пырса, мĕнпур ĕçсыннисене заема хăйсен 3—4 эрнери ĕç укçи чухлĕ çырăнтарассине пурнăçа кĕртмелле.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕ мĕнпур рабочисемпе работницăсене, инженерсене, техниксене тата служащисене пирĕн Социализмлă аслă Тăван çĕршыври мĕнпур ĕçсыннисене Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне çыранса илме чĕнет.

Заема хăвăрт та организованно çырăнса илсе, фашистла нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкассине хăвăртлатма, Совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасатса çитерме, совет çыннисене нимĕç чуралăхĕнчен хăтарма, Европăри халăхсене, гитлерла Германи пусмăрлăхне персе ÿкнĕскерсене, ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăха таварса пама Хĕрлĕ Çара пулăшар.

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне ăнăçлăн вырнаçтарса, пĕтĕм совет халăхĕн пĕрлĕхне, вăл хăйĕн Тăван çĕршывне, большевиксен партине—Ленин—Сталин партине — чĕрĕрен юратса, парăнса тăнине тата совет халăхĕн хамăр сумлă çăмăрпа учителĕмĕр, Верховнăй Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе нимĕç захватчикĕсене çĕнтерес шанчăкĕ çирĕп пулнине кăтартса парар. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 4-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 47 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче та та зенитнăй артиллери тăшманăн 24 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ СЕВАСТОПОЛЬ РАЙОНĔНЧЕ ТĂШМАН ÇАРĔСЕМПЕ ТЕХНИКИНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Майăн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиацин пысăк вăйĕсем Севастополь районĕнче нимĕçсемпе румынсен çарĕсем çине, артиллери батарейисем çине тата тăшманăн çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахса тата штурмласа, тăшман çыннисене нумай пĕтерсе тăкнă. Хуларан çурçĕртерехре артиллери батарейисене нумай пусарса лартнă. Çар склачĕсен тата чугун çул узелĕн районĕнче 10 тĕлте пушар тухнă. Взрывсем нумай пулнине асăрханă, вĕсенчен иккĕшĕ питĕ вăйлă пулнă.

Пирĕн пур самолетсем те хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

* * *

Станиславăн хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ирхине тăшман пехотин ушкăнĕсем темиçе участокра совет çарĕсен позицийĕсене çапăçса пырса пĕлме хăтланнă. Нимĕçсене пур çĕрте те артиллерипе, минометсемпе тата пулеметсемпе персе, саламтса янă, нимĕçсем пирĕн оборонăн малти линине çитеймен те. Гитлеровецсен икĕ ротине пĕтерсе тăкнă. Кăнтăрла иртсен, тăшман пехотипе танксем пĕр чаçăн позицийĕсене атакăланă. Вăйлăн тытăçса илнĕ хыççăн нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 вилли тăрăн выртса юлнă. 12 танк, 2 бронетранспортер тата 20 автомашина пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсемпе çапăçу техники çине бомбăсем пăрахнă. Сывлăшри çапăçусенче совет истребителĕсем нимĕçсен 13 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Тирасполь хулинчен кăнтăртарахра тăшманăн разведка тăвакан отрячĕ çĕрле пирĕн пĕр часть вырнаçнă вырăна кĕрсе кайма хăтланнă. Фоменко капитанăн подразделенийĕ тăшман разведчикĕсене вăхăтра асăрханă. Совет боецĕсем нимĕçсене сывăхах янă та пулеметсемпе тата автоматсемпе пеме пуçланă. Хăйсен 60 салтакĕ тăран вилсен е амансан, тăшман васкаса каялла чакнă.

* * *

Львов облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе ушкăнĕ апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен нимĕçсен 12 çар эшелонне ÿлĕнтерсе янă. Кунсăр пуçне, партизансем 2 поезда сиенленĕ, çав поездсене нимĕçсем çĕмĕрнĕ çулсене тÿрлетме янă пулнă. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче 200 гитлеровецран кая мар пĕтнĕ. Апрелĕн 22-мĕшĕнче Львов облаçĕнчи партизансем чугун çул кĕперĕ çине минăсем лартнă. Çав кĕпер вара сирпĕнсе кайса ишĕлсе аннă, унпа пĕрле кĕпер çине пырса кĕнĕ çар эшелонĕ те аяла чăмнă. Çав участокра вара поездсем 5 талăк хушши çÿреме пултарайман.

* * *

Одесса хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн боецсем нимĕçсен 153-мĕш резерври пехотнăй дивизийĕнчи 717-мĕш полкăн 1-мĕш батальонĕн аманнă командирне Вилли Шульц капитана йăтса килнĕ. Вилли Шульц çапла каласа панă: «Касхине вырăссем пирĕн позицисене атакăларĕç. Вĕсем ытла та вирлĕн атакăланипе манăн подразделенисем тÿсеймесĕр пăтранса пăрĕç те каялла чакрĕç. Салтаксем умĕнче çак офицерсем чупрĕç: 2-мĕш ротăн командирĕ Грюн обер-лейтенант, 3-мĕш ротăн командирĕ Кроте капитан, 4-мĕш ротăн командирĕ Хемпель капитан. Мана хулпуççинчен амантнăччĕ, эпĕ ура çине тăраймарăм. Салтаксемпе офицерсем эпĕ çĕре ÿкнине курчĕç, анчах та пĕри те мана пулăшу памарĕç. Кашни хăй çинчен çеç шухăшланă, хăй çеç сăлăнма тăрăшнă. Эпĕ нимĕç çарĕнче 20 çул тăтăм, анчах офицерсемпе салтаксем çавăн пек хăранине нихăçан та курман. Вĕсем халь вырăссем çавăрса илессинчен вутран хăранă пек хăраççĕ».

* * *

Аялапах фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Житомир облаçĕнчи Коростышев районĕнчи Туренецки ялсоветĕнчи ялсенче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Туренецки ялсоветне кĕрекен ялсене тытса илсен, нимĕçсем мирлĕ халăха çаратма, мăшкăлламма пуçларĕç. Нимĕç влаçĕсем укçан тата налукпа тÿлемелли калама çук пысăк налогсем хучĕç. Кашни ĕне хуçине суса илекен мĕнпур сĕтне нимĕçсене памалла турĕç. Камăн чăх пур, унăн 200 çăмарта памалла пулчĕ. Фашистла ирсĕрсем колхозниксене çарататчĕç. Каялла чакнă чухне нимĕçсем пурăнмалли темиçе çĕр çурта çунтарса ячĕç, сĕт фермисене, лайăх çамлă ăратлă сурăхсен фермисене, колхозсен утарĕсене тустарса пĕтерчĕç, мĕнпур ялхуçалăх инвентарьне çĕмĕрсе пĕтерчĕç. Фашистла ирсĕрсем А. А. Канарский колхознике тата унăн тăвата ачине, Богдан Войцеховский учителе, Люба Стахинскаяна тата ытти çынсене те персе вĕлерчĕç. Нумай çамрăка гитлеровецсем Германие каторгăна хăваласа кайрĕç. Тăван Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă совет çыннисем халь ирĕклĕн сывла пуçларĕç. Вĕсем халь нимĕçсем ишĕлтернĕ колхоз пурлăхне юсаса ура çине тăратаççĕ, фашистла нимĕç ирсĕрĕсене часрах çĕмĕрсе тăкмашкăн Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшаççĕ.

Акт çине çаксем алă пуснă: майор Монастырев, Туровецки ялсовечĕн председателĕ Ратвинский, колхоз председателĕ Кушнарин,

---

Тăван çĕршыв хăватне тĕреклетме 30.000 тенкĕ пачĕ

КАЛИНИНО, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). «Новая жизнь» колхоз председателĕ Дария Угенева юлташ Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне 30.000 тенкĕлĕх çыранса илсе, укçине çийĕнчех тÿлерĕ. Ăна кура çĕнĕ заема колхоз счетоводĕ В. Дмитриев тата бригадирсем Розова, Романова, Иванов юлташсем 10-шар пин тенкĕлĕх туянчĕç. Колхозниксем çĕнĕ заема пурĕ 172.000 тенкĕлĕх çыранса, укçине çийĕнчех тÿленĕ.

Çавăн пекех «Партизан» колхозăн колхозникĕсем 108.500 тенкĕлĕх, «Клевер» колхозăн колхозникĕсем 225.000 тенкĕлĕх, «Трактор» колхозăн колхозникĕсем 120.875 тенкĕлĕх çыранса, укçине пĕтĕмпех парса татрĕç.

Ф. РОМАНОВ.

Служащисем заем укçине тÿлеççĕ

СĔНТĔР, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри учрежденисенчи чылай служащисем çĕнĕ заема çыраннă чухнех заем укçине тÿлеççĕ. Çапла ВКП(б) райкомĕн работникĕсем заем илме уйăхри ĕç укçин 200 процентчĕ чухлĕ çыраннă. Заем укçине 15.160 тенкĕ çавăнтах панă. Халăх судĕнче ĕçлекенсем тата ытти чылай учрежденисенчи служащисем те заем укçине чылай тÿлерĕç.

А. АЛЕКСАНДРОВ.

Вăйлă тырпулшăн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Малта пыракан колхозсем тĕштырăсене акса пĕтерчĕç

ШĂХАСАН. Тăрăнти «Красный партизан» колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене акса пĕтернĕ. Вăрлăхсене пĕтĕмпех яровизацилесе акнă.

Пайкилтри «Активист» колхоз та пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтернĕ. Суракри ĕçĕнче акакансем Г. Андреев, А. Егоров юлташсем кашни кунах нормăна 200 процент тултарнă.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ. «Партизан» колхоз 6 ĕç кунĕ хушшинче тĕштырăсемпе пăрça йышши культурăсене акса пĕтернĕ. Тата 15 гектар аксан, суракри ĕçĕсем пĕтĕмпех вĕçленеççĕ. Çак колхоз кĕрхи калчисем акнă пĕтĕм çĕр лаптăкне тислĕкпе шĕвекĕпе тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе апатлантарнă.

* * *

ЕЛЧĔК. Хĕрлĕ Ялав илнĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз тĕштырăсем акас ĕçе районра чăн малтан вĕçленĕ.

* * *

ПАРАЧКАВ. «Луч» колхоз тĕштырăсене акса пĕтернĕ.

Нормăна ирттерсе тултараççĕ

ВĂРМАР. (Хамăр корр.). Сталин юлташăн Майăн пĕррремĕшĕнче кăларнă приказĕпе хавхаланса, МТС трактористĕсем ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çак кунсенче уйрăмах пысăк тухăçлăхпа ĕçлени курăнать.

Паллă тракторист Макаров юлташ («Победа» колхозра) газогенераторлăй тракторпа кулленех 8—9 гектар сухалать. Унпа пĕрле ĕçлекен Егоров юлташ та кашни кунах нормăна ирттерсе тултарать. Майăн 4-мĕшне вĕсем 70 гектар ытла сухаланă. 15 процента яхăн горючи перекетленĕ.

— Сулăпуç приказĕ пире тата тухăçлăрах, ытларах вăя хурса ĕçлме чĕнет. Эпир хамăра панă сезонри нормăна 150 процентран кая мар тултарма пулатпăр, —теççĕ трактористсем.

Чăрăшкас Мăратри «11 лет Чувашии» колхозра ĕçлекен Алексеев бригади те паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăл кашни кун графика 130 процент таран тултарать. Трактористсем ик пуçласа сĕм тĕттĕмччен уйра ĕçлеççĕ.

«Победа» колхоз членĕсем тĕштырă акассине майăн 7-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех вĕçлеме пулчĕç. Паянхи куна 200 гектар ака сухи тунă тата 170 гектар акнă. Колхозра малта пыракан 5-мĕш бригада (бригадирĕ Кузьмин юлташ) ыран ирхи тырăсене акса пĕтерет.

„Унгастрой" колхозра агротехникăна пăсаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсенче суракри ĕçĕ ăнăçлăн пырать. «Янмурзино» колхоз майăн 4-мĕшĕ тĕлне 149 гектар ытла сухаласа, 75 гектар акнă. Акара 4 сеялка ĕçлет. Вĕсемпе туллин усă кураççĕ. М. Коннова, М. Петрова колхозницăсем машинăпа акса нормăна ирттерсе тултараççĕ. С. Афанасьев, А. Иванова, Е. Киселева юлташсем нормăна 100 процент тултараççĕ, лайăх пахалăхпа сухалаççĕ. Купăста вăрлăхсене пурне те имçампа чÿхесе е яровизацилесе акаççĕ.

Анчах районри хăшпĕр колхозсем агротехникăна пăсаççĕ. «Унгастрой» колхоз иртнĕ çул та суракине начар пахалăхпа ирттернĕ. Çавна май сахал тырпул туса илнĕ. Аппа пулин те култа иртнĕ сулхи йăнăшсене шута илмеççĕ, тырăсене пĕтĕмĕшпех алăпа акаççĕ, агротехника кăтартăвĕсене пурнăçламаççĕ. Майăн 3-мĕшĕ тĕлне МТС колхоза 35 гектар сухаласа панă. Çав участоксем çине вĕсем тулă, пăрçа тата сĕлĕ пĕтĕмпе 25 гектар акнă. Норма тăрăх кашни гектар çине тулă 1,6 центнер вăрлăх акас вырăнне 1,4 центнер кăна акнă.

Колхоз председателĕ Федоров юлташ уйра пачах пулмасть. Вăл бригадăсенче кунсерен миçе гектар сухаланине акнине те пĕлмест.

—Эпĕ мĕн чухлĕ сухаланине ăçтан пĕлем, — тет вăл, —бригадир сведенисене счетовода парать вĕт. Председатель Федоров суракри ĕçне ертсе пымасть. Çавăнпа та ака ĕçĕ вăраххăн пырать. Лашасемпе туллин усă курмаççĕ. 40 лашаран 16-шĕ çеç ĕçлеççĕ.

Нумаях пулмасть ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ хăйĕн ларăвĕнче Красноармейски районра суракри ĕçĕ начар пыни çинчен сÿтсе-явса, çирĕп решени йышăнчĕ. Ун хыççăн та районри руководительсем тивĕçлĕ вывод туман-ха. Колхозсенче тырăсене алăпа акнă тĕслĕхсем нумай.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн вăхăтлă та паха решенине кашни колхозрах пĕр пăрмасăр пурнăçламалла.

С. ШАДИН.
[illegible] корр.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе палăртакан Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтерни

Гитлеровецсем совет çыннисене шатраллă тиф ертсе вĕлерсе пĕтерни

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси хăйĕн маларах пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕсенче Гитлер правительствипе Германи çарĕн верховнăй командованийĕ мирлĕ совет халăхне вĕлерсе пĕтернине кăтартакан темиçе документ пичетлесе кăларнăччĕ. Нимĕç оккупанчĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем совет çыннисене Германи çарĕн тылĕнче тунă концентрациллĕ лагерьсенче уйрăмах хаяррăн асаплантарнă тата йышлăн вĕлерсе пынă. Çар влаçĕсем çеç мар, оккупациллĕ ытти мĕнпур влаçсем те çав лагерьсене совет халăхне фронт сывăхĕнчи вырăнсенчен куçарма тунă, тесе пытарса тăнă.

Нимĕç оборонин малти линийĕнче совет çыннисем валли „вилĕм лагерĕсем" туни

Халĕхи вăхăтра çакна палăртнă: Германи çарĕ Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче поражениссем тÿснĕ пирки тата халь условисем улшăннă пирки, фашистла нимĕç ирсĕрĕсем совет çыннисене тискерĕн вĕлерсе пĕтермелли çĕнĕ мелсемпе анлăн усă курма пуçланă. Çав мелсенчен пĕри вăл — совет халăхĕ хушшинче тата Хĕрлĕ Çар чаçĕсенче шатраллă тиф сарни пулса тăрать. Халь паллă пулнă тăрăх, çав ĕçе тума гитлеровецсем хăйсен оборонин малти линийĕнче хăйне уйрăм концентрациллĕ лагерьсем тăваççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн наступлени туса пыракан чаçĕсем 1944 çулхи мартăн 19-мĕшĕнче Белоруссии ССР-ĕнчи Полесье облаçĕнчи Озаричи ялĕ районĕнче нимĕç оборонин малти линийĕнче виçĕ концентрациллĕ лагерь тупнă. Çав лагерьсенче ачасем тата ĕçлеме пултараймаи хĕрарăмсемпе старикссем 33 пин çын ытла пулнă. Çав лагерьсем çак вырăнсенче пулнă: пĕри — Дерт посёлокĕ патĕнчи шурлăхра; тепри — Озаричи ялĕнчен 2 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре; виççĕмĕшĕ — Подосинник ялĕнчен 2 километр хĕвеланăçнерехри шурлăхра.

Ятарласа тунă комисси çав лагерьсене мĕн пирки тунине тĕпчесе пĕлнĕ. Комиссире çаксем пулнă: Белоруссии ССР Совнаркомĕн председателĕ П. К. Пономаренко, Белоруссии ССР Верховный Совечĕн депутачĕ Н. Г. Грекова, Белоруссири Наука Академийĕн действительнăй членĕ Якуб Колас, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ Г. Е. Гришко, интендант службин генерал-майорĕ А. Н. Сакович, çарăн санитари службин начальникĕ В. Н. Колодкин подполковник; унта тата Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин представителĕ Д. И. Кудрявцев хутшăнса ĕçленĕ.

Çав лагерьсем вĕсем йĕплĕ пралук карса çавăрăннă уçă вырăнсемех пулнă. Вĕсем патне пымалли вырăнсене минăсем лартса тухнă. Лагерьсен территорийĕнче нимĕнле çуртйĕр те пулман. Унта хупнă çынсем çĕр çинчех пурăннă. Вĕсенчен нумайĕшĕ, утма пултарайманнисем, тăнсăр пулса, пылчăк çинчех выртнă. Унта хупнă çынсене кăвать хума, ая сармашкăн çапăсем пухма чарнă. Çак йĕркене пăсма хăтланнăшăн та гитлеровецсем совет çыннисене пере-пере вĕлернĕ.

Концентрациллĕ лагерьсене оборонăн малти линийĕнче тунă чухне нимĕçсем, пĕрремĕшĕнчен, вĕсене хăйсен позицийĕсене хăйсем тытса тăма шанман вырăнсенче тунă; иккĕмĕшĕнчен, лагерьсене совет çыннисене йышлăн пухса, нимĕçсем унта, пуринчен ытла, ачасене тата ĕçлеме пултарайман хĕрарăмсемпе старикссене вырнаçтарнă; виççĕмĕшĕнчен, начарланса çитнĕ тата ĕçлеме пултарайман çынсемпе пĕрле, санитари енчен питĕ начар условисенче пурăннăскерсемпе пĕрле, нимĕçсем шатраллă тифпа чирленĕ темиçе пин çынна вырнаçтарнă, çав çынсене вĕсем Белоруссии ССР-ĕн вăхăтлăха оккупациленĕ тĕрлĕ районсенчен юри пухнă пулнă. Лагерьсенчен ирĕке кăларнă çынсем хушшинче 13 çула çитмен ачасем 15.960 çын, ĕçлеме пултарайман хĕрарăмсем — 13.072 çын, старикссем — 4.448 çын пулнă. Тĕпчесе пĕлсе çакна палăртнă: фашистла ирсĕрсем пĕтĕм мирлĕ совет халăхне фронт сывăхĕнчи районсенчен тыла куçарас сăлтавпа çав лагерьсене хăвала-хăвала пухнă.

Жлобин хулинче нимĕç комендатури халăха радиопа çапла чĕнсе каланă: «Жлобин хулинчи граждансем, Германи командованийĕ сире инçери тыла куçарать, мĕншĕн тесен красноармеецсем сире артиллерипе тата минометсемпе пеме пуçлĕç. Сире большевиксен тискерлĕхĕсенчен çăлса хăварас тесе, эпир сире инçери тыла куçаратпăр. Хăвăрпа пĕрле мĕнпур япалăрсене, лашăрсене, урапăрсене, выльăхăрсене илĕр. Хăвăрпа пĕрле тата котелоксемпе кашăксем илĕр, мĕншĕн тесен çул çинче сире вĕри апат параççĕ. Нимĕç салтакне итлĕр, унтан ан пытанăр, ан тарăр. Пĕтĕм хулана нимĕç çарĕсем çавăрса илнĕ. Пытанма е тарма хăтланакан кашни çынна персе вĕлереççĕ. Урама тухăр та нимĕç салтакĕсем кăтартнă еннелле кайăр».

Фашистла нимĕç влаçĕсем, малтанах хатĕрлесе хунă план тăрăх ĕçлесе, ăсатмалли пунктсем организациленĕ, çав пунктсене мирлĕ çынсене пурне те хăвала-хăвала пухнă. Унта нимĕçсем малтан ĕçлеме пултаракан арçынсемпе хĕрарăмсене тата 13 çултан иртнĕ ачасене суйласа илнĕ те Германие каторгăлла ĕçе ăсатнă, ытти ачасене тата ĕçлеме пултарайман çынсене оборонăн малти линийĕнчи концентрациллĕ лагерьсене янă.

1944 çулхи мартăн 9-мĕшĕнчен пуçласа 13-мĕшне çитиччен гитлеровецсем Озаричи ялĕн районĕнчи лагерьсене Рудобелка, Рабкор, Старушка, Красный Берег станцийĕсен тата Микуль-Городок, Порослище, Медведевка ялĕсен районĕсенчи ăсатмалли пунктсене темиçе вунă пин совет çыннине хăваласа пухнă, вĕсене эсэсовецсем тата охраннăй полици вăйлă хуралласа пынă.

«1944 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче, тул çутăлса килнĕ чухне, — тесе каласа панă Е. Маз учительница, — пире, Жлобин хулинчи çынсене, нимĕçсем чугун çулăн тепĕр енне, шкул çуртĕ патне хăваласа пухрĕç. Унта вĕсем ĕçлеме пултаракан çынсене пурне те суйласа илчĕç, ытти çынсене — старикссене, ачасене тата хĕрарăмсене — поезд çине лартрĕç, сивĕ, хутман вагонсене 60—70-шер çын лартрĕç. Вагонсенче эпир санитари енчен калама çук йывăр условисенче, сивĕре, пылчăк çинче лартăмăр. Пире çапла Рабкор станцине илсе çитерчĕç те станцирен виçĕ километрта вырнаçнă лагере хăваласа кайрĕç. Вагонсенче сивĕпе тата выçлăхпа нумай ача шăнса вилчĕ тата лагере кайнă чухне çул çинче старикссемпе хĕрарăмсем тата ачасем нумай вилчĕç».

Лагерьтен ирĕке тухнă Л. Пекарская Комиссие çапла каласа панă: «1944 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче каçхине пире, Жлобин хулинче пурăнакан çынсене, çур сехет хушшинче Жлобин—Южная станцине пухăнма хушрĕç. Унта нимĕçсем çамрăк çынсене суйласа илчĕç те таçта илсе кайрĕç. Унтан пире теплушкăсене хăваласа кĕртрĕç те вагонсен алăкĕсене питĕрсе илчĕç. Пире ăçта илсе кайнине эпир пĕлмен, анчах та пурте ырă пулас çуккине сиссе тăнă. Кайран çакă паллă пулса тăчĕ: пире Рудобелковски чугун çулпа илсе кайнă иккен; мартăн 15-мĕшĕнче каçпала вара вагонсенчен антарчĕç. Çĕрле чĕркуççи таран пылчăк тăрăх пире лагере хăваласа кайрĕç. Çав лагерьтен иккĕмĕш лагере ячĕç. Çул çинче нимĕçсем пире хĕнетчĕç, кая юлакансене пере-пере вĕлеретчĕç. Акă виçĕ ачаллă хĕрарăм пырать. Пĕр ачи ÿкрĕ, нимĕçсем ăна пеме тытăнчĕç. Амăшĕпе унăн тепĕр икĕ ачи, хăраса ÿксе, каялла çаврăнса пăхрĕç, салтаксем — тискер кайăксем вĕсене те пĕрин хыççăн тепĕрне пеме тытăнчĕç. Амăшĕ калама çук хытă çухăрма тытăнчĕ, ăна вара çывăхранах персе вĕлерчĕç. Акă тата амăшĕпе ывăлĕ, Бондарев хушаматлăскерсем, пыраççĕ. Ачи ыванниипе ÿкрĕ. Амăшĕ ун патне пĕшкĕнчĕ те ăна ырă сăмах каласа йăпатасшăн, анчах ывăлĕ те, амăшĕ те урăх тăраймарĕç, çутă пĕлĕте кураймарĕç, — нимĕçсем вĕсене персе пăрахрĕç».

Малецкая Рудня ялĕнче пурăнакан А. И. Лисовая çапла каласа панă: «Лагере кайнă чухне ываннă совет çыннисен пĕр ушкăнĕ çул çинче канма ларчĕ. Пире хуралласа пыракан гестаповец йытăсене пирĕн çине вĕслетрĕ те, çав йытăсем Квитковскаяна тата ыттисене те питĕ хытă çыртса пĕтерчĕç»

«Манăн куç умĕнче, — тесе пĕлтернĕ «Авангард» совхозра пурăнакан М. П. Буслов, — нимĕçсем лагерьте Михайловская ялĕнчи гражданкăна — виçĕ ача амăшне Грека вĕлерчĕç, вĕсем ăна кăвать валли çапăсем пухас тесе йĕплĕ пралук хыçне тухнăшăнах вĕлерчĕç».

Ковальки ялĕнче пурăнакан Х. О. Манько çапла каласа панă: «Лагерь тавра карса çавăрăннă пралуксемпе юнашар канавсем чавса тухнăччĕ, çав канавсенче шурлăхри вараланчăк шыв тăратчĕ. Канавсенче çĕрекен виллесем те нумай выртатчĕç. Нимĕçсем пире ĕçме шыв памасчĕç, çавăнпа пирĕн çав канаври шыва ĕçме тиветчĕ».

Гадуни ялĕнчи П. Н. Безнивец, лагерьте пурăннăскер, çапла каласа панă: «Эпĕ пурăннă лагерь йĕри-тавра йĕплĕ пралук карса çавăрăннăччĕ тата ун çумĕпе минăсем хурса тухнăччĕ. Лагерьтен шыв ăсма е вутă пухма тухма хăтланакан çынсене хĕнетчĕç, пере-пере вĕлеретчĕç. Çапла Домановически районри Слобода ялĕнчи П. А. Мокряка — 4 ача амăшне — вĕлерчĕç».

Лагере хупнă совет гражданĕсенчен фашистла нимĕç захватчикĕсем тăхăнмалли япаласене тата сыхланса юлнă хаклăрах япаласене турта-турта илнĕ.

Давидовичи ялĕнчи Л. Д. Шуляренко çапла каласа панă: «Лагере 50 нимĕç салтакĕ пычĕç. Вĕсем аллисене патаксем тытнăччĕ. Çав салтаксем лагере хупнă çынсене пăхса тухрĕç те вĕсем çинче курнă лайăх тумтирсене тата атă-пушмаксене турта-турта илчĕç. Хирĕç тăракансене патакпа хĕнерĕç. Нимĕç салтакĕсем хĕрарăмсем çинчен вĕсен тутăрĕсене, пальтисене тата атă-пушмакĕсене хывса илнине эпĕ хам та курнă».

Фашистла нимĕç пуçкасакансем совет халăхĕ хушшинче юри шатраллă тиф сарни

Малта кăтартнă Комиссин материалĕсене пăхса тухсан, Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин членĕ академик И. П. Трайнин тата суд медицинин эксперт комиссийĕ ĕçе тепĕр хут тĕпчесе тухнă. Вара çакна палăртнă: нимĕçсен çар влаçĕсем, шатраллă тиф сарас тесе, шатраллă тифпа чирленĕ çынсене нимĕç оборонин малти линийĕнчи концентрациллĕ лагерьсене сывă çынсемпе пĕрлех вырнаçтарнă. Тифпа чирленĕ çынсене нимĕçсем çав лагерьсене Белоруссии ССР-ĕн Полесье, Минск, Гомель, облаçĕсенчен тата ыттисенчен те пухнă.

Заболотье ялĕнчи М. Б. Лабезникова, лагерьте пурăннăскер, Комиссие çапла каласа панă: «Пирĕн çурта нимĕçсем килсе кĕчĕç. Эпĕ тифпа чирленине пĕлсен, вĕсем çав кунах мана тата икĕ салтака ячĕç те мана хашала лагере илсе кайрĕç».

Солоновое ялĕнче пурăнакан О. А. Шептунова çапла каласа панă: «Пирĕн ялти мĕнпур халăха нимĕçсем Воротынь ялне хăваласа кайрĕç, çав ялта шатраллă тифпа чирленĕ çынсем нумай пулнă. Воротынь ялĕнчен вара мĕнпур çынсене чирлисемпе пĕрлех Озаричи ялĕн районĕнчи концентрациллĕ лагере ячĕç».

Лагерьтен ирĕке кăларнă П. С. Митрахович, Ново-Белица ялĕнче пурăнаканскер, çапла каласа кăтартнă: «Пире, шатраллă тифпа чирленĕ çынсене, Микуль—Городок ялĕн районне, йĕплĕ пралук карса çавăрăннă лагере илсе кайрĕç».

Новогрудок ялĕнче пурăнакан З. П. Говрильчик çапла каласа панă: «Виçĕ талăк хушшинче лагере шатраллă тифпа чирленĕ çынсене машинăсемпе турттара-турттара пычĕç, çавăнпа та лагере хупнă сывă çынсем нумайĕшĕ тифпа чирлерĕç. Мартăн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çав тифпа чирленипе питĕ нумай çын вилчĕ».

Иганцы ялĕнче пурăнакан Е. Душевская çапла каласа панă: «Пире, шатраллă тифпа чирленисене, нимĕçсем лагере Паричски районри Ковчицы ялĕнчен илсе пычĕç. Эпир сывă çынсене чир ертме пултарассине пĕлнĕ, çавăнпа та хамăра сывă çынсенчен уйăрма ыйтрăмăр, анчах нимĕçсем эпир ыйтнине хăлхана чикмерĕç»

Фашистсем оборонăн малти линийĕнче тунă лагерьсене сывă çынсемпе чирлисене ăсатмалли пунктсенчен çеç илсе пыман, вĕсем тата çав лагерьсене шатраллă тифпа чирленĕ совет çыннисене больницăсемпе лазаретсенчен юри турттарса пынă.

Замощаны ялĕнче пурăнакан Н. П. Третьякова, чирлĕскер, çапла каласа панă: «Эпĕ февраль уйăхĕн варринче чирлерĕм, çавăн хыççăн мана Лески ялĕнчи больницăна вырнаçтарчĕç. Больницăра эпĕ урайĕнчех, салтăнмасăрах выртса пурăнтăм. Мана нимпе те эмеллемерĕç. Унтан мана больницăран Дерт ялĕ çывăхĕнчи концентрациллĕ лагере ячĕç».

Жлобин хулинче пурăнакан Г. С. Широков çапла каласа панă: «Мартăн 12-мĕшĕнче Жлобин больницинчен шатраллă тифпа чирленĕ 200 çынна илсе тухрĕç. Вĕсене пурне те лагере илсе кайрĕç».

И. О. Романенко Комиссие çапла пĕлтернĕ: «Концентрациллĕ лагерьте пурăннă чухне эпĕ Жлобин хулинчен илсе пынă çынсене нумай куртăм, вĕсем тифпа чирлĕччĕ. Вĕсем нÿрлĕ çĕр çинче, пылчăк çинче выртатчĕç. Вĕсем хушшинче вилнисем те пурччĕ. Темиçе çын, чирлĕ пирки аташса, çав пылчăк çинче упаленсе çÿретчĕç. Врачсем çукчĕ. Чирлисем хушшинче эпĕ Жлобин хулинчи гражданкăсене — Щуклина тата Гурскаяна куртăм. Вĕсем мана çапла каларĕç: пире, тифпа чирленĕскерсене, çак лагере хулари больницăран илсе килчĕç, терĕç».

Концентрациллĕ лагерьсене хупнă çак совет гражданĕсем те Комиссие çавăн пекех каласа панă: Д. Г. Жданович, О. А. Зайцева, Х. Т. Русинович, Т. Н. Решетко, М. Т. Анисимова, И. Р. Дробеза, Л. К. Новик, П. Я. Верос, А. Е. Коваленко, В. Ф. Бондаренко, М. В. Довыденко тата ыттисем те.

Çапла ĕнтĕ, совет халăхĕ хушшинче шатраллă тиф сарас тесе нимĕçсем çав лагере тифпа чирленĕ çынсене юри турттарса пынине нумай совет гражданĕсем питĕ лайăх кăтартса панă, çав граждансене нимĕç влаçĕсем тифпа чирлени 5, 7, 8, 9 кун çитсен концентрациллĕ лагерьсене ирĕксĕр ăсатнă.

Акă документсемпе кăтартса панă çавăн йышши хăйпĕр фактсем, ку фактсем вĕсем шута илнĕ питĕ йышлă фактсен пĕр пĕчĕк пайĕ çеç пулса тăрассĕ.

Барбару ялĕнчи Е. П. Болейкона тифпа чирлесен 7-мĕш кунĕнче лагере янă, унăн 4 ачи—11 çулхи Николай, 9 çулти Нина, 7 çулти Любовь, 5 çулти Василий—лагере кайнă чухне çул çинчех чирленĕ. Слобода ялĕнчи Грека, Юрки ялĕнчи Л. К. Новика, Ломовичи ялĕнчи А. Е. Коваленкона, Заморщаны ялĕнчи А. Пархоменкона, Хомичи ялĕнчи М. М. Решеткона, Детбин ялĕнчи Н. Е. Получине, Подветки ялĕнчи М. И. Голубе, Годуни ялĕнчи Т. П. Крука, Ковальки ялĕнчи Евстратовскаяна тата ыттисене те нумайĕшне вĕсем тифпа чирлени 5—9 кун çитсен лагере янă.

Концентрациллĕ лагерьсенче çаксем тифпа чирленĕ: Буда ялĕнчи М. Д. Земжецкая, Белица ялĕнчи И. Романов, Заполье ялĕнчи И. Венцов, Волосовичи ялĕнчи П. Белько, Порослище ялĕнчи М. З. Пошен, Комадовка ялĕнчи В. С. Дроздова, Иванище ялĕнчи А. М. Ящур, Гар ялĕнчи М. И. Пацай, Пружилище ялĕнчи Ф. Д. Дайнеко, Новоселки ялĕнчи Т. Козлова, Годиновичи ялĕнчи Ф. С. Шкутова, Радужа ялĕнчи А. С. Грыжкова, Трельцы ялĕнчи Е. Антоник, Закеричи ялĕнчи А. Удот тата ытти нумай çынсем.

Германи çарĕн командованийĕ оборонăн малти линийĕнчи лагерьсене хăйĕн агенчĕсене ятарласа янă, çав агентсен халăх хушшинче тата Хĕрлĕ Çар чаçĕсенче шатраллă тиф мĕнле сарăлнине асăрхаса тăма хушнă.

308-мĕш разведка группин пирĕн алла лекнĕ нимĕç агенчĕ Ф. Расторгуев çапла каласа панă: «1944 çулхи мартăн 11-мĕшĕнче мана автомашинăпа Глуск хулинчен 40—45 километр кăнтăртарахри чугун çул станцине илсе кайрĕç, манпа пĕрле нимĕç çарĕн обер-лейтенанчĕ — 308-мĕш группăн начальникĕ Керст ларса пычĕ. Каçхине вăл мана çапла каларĕ: сана çак станцирен 30 километрти лагере вăхăтлăха яратпăр, терĕ. Керст мана çав лагерьте мирлĕ совет гражданĕсем 40 пин çын таран пурăнни çинчен каласа пачĕ, çав çынсенчен 7 пин çын таран шатраллă тифпа чирленĕ, çитес виçĕ-тăватă кун хушшинче çав лагере тата 20 пин граждана çитти ярасçĕ, терĕ. Мана çавăнтах вара тифпа чирлесрен хул кастарчĕç

Мана 308-мĕш группа начальникĕ панă задани çакăн пек пулнă: манăн Озоричи ялĕнчен хĕвеланăçнерехри лагере пымалла та унта ытла курăнмасăр пурăнмалла. Манăн çакна пĕлмелле: çав лагерьсем Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тытса илнĕ территорие пулса тăрсан, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем лагерьти граждан халăхне мĕн тăвĕç, хĕрарăмсемпе ачасене ăçта ярĕç, чирлисене мĕн тăвĕç. Хама панă задание пурнăçласан, манăн нимĕçсем енне каçса, вĕсене хам тупнă сведенисене памалла пулнă».

Суд медицинин экспертизи калани

Германи влаçĕсем оборонăн малти линийĕнчи концентрациллĕ лагерьсене хупнă мирлĕ совет халăхĕ хушшинче юри шатраллă тиф сарнине суд медицинин экспертизи те кăтартса парать.

Суд медицинин эксперт комиссийĕнче çаксем пулнă: арми эпидемиологĕ С. М. Юлаев подполковник, армин суд медицинин эксперчĕ П. П. Алексеев майор тата армин патолого-анатоми лабораторин начальникĕ В. М. Бугянин. Комисси çакна палăртнă: совет çыннисене шатраллă тиф ертес тесе:

«а) Германи влаçĕсем концентрациллĕ лагерьсенче совет гражданĕсене сыввисене те шатраллă тифпа чирленисене те пĕрлех вырнаçтарнă (158-мĕш, 180-мĕш, 161-мĕш, 164-мĕш, 178-мĕш, 183-мĕш номерлĕ тата ытти эпиданамнезсем);

б) лагерьсенче шатраллă тиф часрах сарас тесе, нимĕçсем шатраллă тифпа чирленĕ çынсене пĕр лагерьтен тепĕр лагере куçарнă (эпиданамнезăн, клиникăн тата серологи тĕпчевĕсен 2-мĕш, 8-мĕш, 10-мĕш, 15-мĕш, 16-мĕш, 17-мĕш тата ытти номерлĕ даннăйсем);

в) шатраллă тифпа чирленĕ çынсем лагерьсене кайма килĕшмесен, нимĕç влаçĕсем вĕсене ирĕксĕрлесе янă (ыйтса пĕлнин 269-мĕш, 270-мĕш, 271-мĕш, 272-мĕш номерлĕ протоколĕсем);

г) нимĕç захватчикĕсем шатраллă тифпа чирленĕ çынсене больницăсенчен илсе пырса, вĕсене лагерьсенчи сывă çынсемпе хутăштарса янă. Çакна 138-мĕш, 139-мĕш, 149-мĕш, 166-мĕш, 175-мĕш, 180-мĕш, 40-мĕш, 49-мĕш, 50-мĕш номерлĕ эпиданамнезсем тата ыйтса пĕлнин 273-мĕш номерлĕ протоколĕ кăтартса параççĕ;

д) совет халăхне шатраллă тиф ертес ĕçе февраль уйăхĕн иккĕмĕш çурринче тата март уйăхĕн пĕрремĕш çурринче тунă».

Полесье облаçĕнчи Озаричи ялĕн районне нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн 1944 çулхи мартăн 19-мĕшĕпе 21-мĕшĕ хушшинче Хĕрлĕ Çар чаçĕсен командованийĕ 4.052 совет граждане, çав шутра 13 çула çитмен 2370 ачана, госпитальсене вырнаçтарнă.

Ятарласа тунă комисси тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, суд медицинин экспертизи каланă тăрăх, документсем тăрăх, çавăн пекех тата Чрезвычайнăй Государственнăй Комиссин членĕ академик И. П. Трайнин тĕпчесе пăхнă тăрăх, Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси çакна палăртнă: оборонăн малти линийĕнче концентрациллĕ лагерьсем туса, унта сывă çынсемпе шатраллă тифпа чирленĕ çынсене пĕрле вырнаçтарса, нимĕçсен çар влаçĕсем совет халăхĕ хушшинче тата Хĕрлĕ Çар чаçĕсенче шатраллă тиф сарасшăн пулнă, çакă вăл вăрçă вăрçмалли законсемпе йăласене, цивилизациллĕ халăхсем йышăннăскерсене, калама çук хытă пăсни пулать

Фашистла нимĕç пуçкасакансене ответ тыттармалла!

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси çав преступленисемшĕн çаксем айăплă тесе шутлать: Гитлер правительстви, Германи çарĕн верховнăй командованийĕ, çавăн пекех тата 9-мĕш армин командующийĕ танковăй çарсен генералĕ Харпе, 35-мĕш армейски корпус командирĕ пехота генералĕ Визе, 41-мĕш танковăй корпус командирĕ Вейдман, генерал-лейтенант, 6-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ Гроссман генерал-лейтенант, 31-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ Экснер генерал-майор, 296-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ Кульмер генерал-лейтенант, 110-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ Вайсгаупт генерал-майор, 35-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ Рихард генерал-лейтенант, 34-мĕш пехотнăй полк командирĕ фон Капф полковник, 109-мĕш пехотнăй полк командирĕ Рогилайн майор, «Абвертрупп 308» начальникĕ Керст обер-лейтенант.

Çав çынсен пурин те совет халăхне хирĕç тунă преступленисемшĕн çиеĕп ответ тытмалла.

Чуптару кампанине ирттерме хатĕрленеççĕ

КАЛИНИНО. Услапари «Броневик» колхозра лашасен йышĕпе ăратлăхне лайăхлатса пырас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Иртнĕ çулла зоотехник Г. Иванов тата айăрсем пăхакан конюх М. Федоров тăрăшса ĕçленипе 32 кĕсререн 30 тиха илсе ÿстернĕ. Хăмлана кĕсресене пурне те вăхăтра искусственнăй майпа чуптарса хăварнă. Халĕ чупса юлнă кĕсресем пурте пĕтĕ.

«Броневик» колхозра кĕсресене чуптарса хăварас тĕлĕшпе кăçал та лайăх хатĕрленеççĕ. Зоотехник Г. Иванов юлташ чуптару пунктне тирпейлĕн çутарса тасаттарнă. Чуптару вăхăтĕнче кирлĕ пулакан инструментсемпе ытти хатĕрсене вĕçĕх хатĕрлесе çитернĕ. Конюх М. Федоров юлташ «Лебедь» тата «Айгир» айăрсене самăр тытма тăрăшать. Вĕсене вăл Иванов юлташ кăтартнă пек тăрантарса шăварать, тасатать тата кулленех уçăлтарать.

Кăçал колхозра 42 кĕсре чупса юлмалла. Халĕ вăл кĕсресем пурте вăтам мăнтăр. Кĕсресен чупса юлас туртăмне асăрхасах тăраççĕ, пĕтĕ кĕсресем хăмласан, вĕсене вăхăтра чуптарса хăварас тесе лайăх пăхаççĕ.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Ĕнесемпе вăкăрсене ĕçе вĕрентрĕç

ШĂМĂРШĂ. Анат Чатка ялсоветне кĕрекен Максим Горький, Сталин ячĕпе тăракан, «Красный воин» колхозсенче майракаллă шултăра выльăхсене ĕçе вĕрентрĕç.

Асăннă колхозсенче кашнинчех 6-шар вăкăра, 2-шер пушмак пăрува ĕçе вĕрентнĕ. Вĕсемпе халь уя тислĕк кăларнă çĕрте, улăм турттарнă çĕрте усă кураççĕ.

Майракаллă шултăра выльăхсене ĕçе вĕрентнĕ çĕрте П. Морозов, Константинова, В. Кондратьев юлташсем уйрăмах палăрчĕç.

П. АЛЕКСЕЕВ.

Ют çĕршывсенче

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН СОВЕТ СОЮЗĔН МАРШАЛĔН СТАЛИН ЮЛТАШĂН МАЙĂН 1-МĔШĔНЧИ ПРИКАЗĔ ÇИНЧЕН ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧИ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Англири хаçатсем паян çакна кăтартса панă: Сталин Маршалăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ Совет Союзĕн тулашĕнче пурăнакан темиçе миллион çынна хавхалантарĕ.

«Таймс» хаçат редакци çырнă статьяра çапла калать: çак приказ «Пĕрлешÿллĕ нацисен кашни членне янă послани пулса тăрать, вăл вĕсен тăшманĕсене асăрхаттарни пулса тăрать. Вăл—питĕ лайăх чухласа çырнă хавхалантаракан документ». Хаçат çав приказ Германин вассалла çĕршывĕсенчи халăхсемшĕн уйрăмах паха пулса тăнине палăртать.

Хаçат çапла калать: бомбăсем пăрахни малтан тумалли ĕç пулса тăрать, анчах та «Германи çарне аркатса тăкни — Германие парăнтармалли услови пулса тăрать».

«Дейли экспресс» Англипе Америка пулăшăвĕн анлăшне Сталин пысăк хак панине ырлать. «Çапла вара, тăтăклă сехет çывăхарса килнĕ вăхăтра союзлă халăхсем пĕр-пĕрне шанни тата пĕр-пĕрне хисеплени ÿссе пырать», тесе çырать хаçат.

«Йоркшир пост» хаçат çапла çырать: Сталин юлташăн приказне «пĕтĕм оккупациленĕ Европăри выçă пурăнакан çынсемпе тĕрмесенче пурăнаканнисем хăйсене ирĕке кăларас вăхăт çывăхарса килнине систерекен паллă вырăнне йышăнĕç. Тăшмансемшĕн вăл пĕрлешÿллĕ нацисене пĕр-пĕринчен уйăрса яма шанни пĕтсе ларнине пĕлтерекен приказ пулса тăрать».

«Дейли экспресс» хаçат редакци çырнă статьяра çапла калать: Сталин приказĕ Англи çыранĕсенчен пуçланса каймалли событисем пысăк вырăн йышăнмаллине палăртать. Сталин вырăс халăхне Англипе Америка пулăшни мĕн тери паха пулса тăни çинчен каласа панине палăртса, хаçат малалла çапла çырать: «Сталин чĕрĕрен мухтанине икĕ çĕршывра та ырласа йышăнчĕç». Сталинăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ, — тет хаçат, — союзниксене пĕр-пĕрне ытларах шанма тата хисеплеме май парать, нацистсем вĕсене хирĕçтерсе яма хăтланни пăчланса ларчĕ,—тет.

Лондонри радио обозревателĕ Томас Кадетт Сталин юлташăн приказĕ çинчен çапла калать: Маршал Сталин нихăçан та шухăшламасăр каламасть, вăл кирек хăçан та чи кирлĕ япаласем çинчен калать. Вăл Германи çарĕсене хăйĕн шăтăкĕ патне упаленсе каякан аманнă тискер кайăкпа танлаштарни питĕ тĕрĕс, вăл нимĕçсен аманнă тискер кайăкне хыçранах хăваласа пырса, ăна хăйĕн шăтăкĕнче вĕлермелли çинчен каларĕ.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Македонире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем вăйлă çапăçнă хыççăн Кратовăна йышăннă. Болгарин 160 салтакне ытла тыткăна илнĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ.

Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем Санджак территорине тăшмантан тасатса пыраççĕ. Темиçе кун хушши çапăçнă хыççăн Белополье хулине йышăннă.

Черногорире Куче районне ирĕке кăларнă.

Далмацире Светы Никола портĕнче нимĕçсен хĕçпăшалланă пароходне экипажĕ-мĕнĕпех тытса илнĕ. Тупăсем, боеприпассем тата çар пурлăхĕ чылай тытса илнĕ.

ЛОНДОНА ТИТО МАРШАЛĂН ÇАР МИССИЙĔ ПЫРСА ÇИТНĔ

ЛОНДОН, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Британин Тито маршал çумĕнчи çар миссийĕн руководителĕпе бригаднăй генералпа Маклинпа пĕрле Лондона генерал-майор Велебит (Тито маршалăн çар миссийĕн руководителĕ) тата Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн офицерĕ Вогельник пынă.

«Ньюс кроникл» хаçат Велебит генералпа калаçни çинчен çырать. Велебит генерал Михайлович çинчен çапла каланă: «Михайлович пирĕн çĕршыва сутнă çын, çак шухăш вăл пирĕн шухăш çеç мар, вăл тĕнчери пур ырă кăмăллă çынсен шухăшĕ те пулса тăрать. Вăл Недичпа Павеличран та усалтарах сутăнчăк. Михайлович салтакĕсем Германи çарĕсен флангне хÿтĕлесе пыраççĕ. Унăн хăшпĕр салтакĕсем нимĕç салтакĕсен формине тăхăнса çÿреççĕ.

КĔСКЕН

▲ Будапештра Венгрин юстици министрне Иштван Антала вĕлерме тăнă. Антала револьверпа персе хытă амантнă. Перекенсем тарса пытаннă.

● Халĕхи вăхăтра Германире тыткăна лекнĕ тата Францирен кăларса янă 2.700 пин француз пурăнать. Нимĕçсем питĕ хытă тĕрĕслесе тăраççĕ пулин те, нумай французсем вăрттăн ĕçлекен организацисен членĕсем пулса тăраççĕ.

Ответлă редакторăн ĕçĕсене тăваканĕ П. Н. НИКОЛАЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типографи №1, Управлени полиграфпромышленноç при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз

НГ 00605